Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

82 (8148) № * Шăмат кун, 2013 çулхи чӳк (ноябрь) уйăхĕн 2-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Ноябрĕн 4-мĕшĕ – Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ

**ХАКЛĂ ЕНТЕШСЕМ! МУРКАШ РАЙОНĔН ÇЫННИСЕМ!**

Сире пурне те сывхарса килекен Раççейри Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Çак уяв пире тĕрлĕ наци çыннисем пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнни тата халăх пĕрлĕхĕ мĕн тери пысăк пĕлтерĕшлине кăтартса парать. Хамăр çĕр-шывăн историйĕн страницисем те çакнах çирĕплетеççĕ.

Пĕрле чухне çеç йывăрлăха çĕнтерме, умри тĕллевсене пурнăçлама пулать. Çавна яланах асра тытмалла пирĕн. Ахальтен каламан вĕт ваттисем: «Пĕрлĕхре – вăй», – тесе. Пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнмалла, пĕр тĕллевлĕн, пĕр-пĕрне ăнланса вăй хумалла, кашни хăйĕн ĕç вырăнĕнче чунне парса ĕçлемелле. Çавăн чухне çеç кирек епле йывăрлăха та çĕнтерме пулать. Вара çĕр-шывăмăр, районăмăр татах та вăйлăрах, çирĕпрех, тĕреклĕрех пулĕ. Çакна пирĕн ку таранччен туса ирттернĕ ĕçсем те çирĕплетсе пАраççĕ. Пурнăçламалли вара пирĕн малалла та сахал мар. Ăнлану, пĕрлĕх малти вырăнта пултăр. Малашне те пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнасчĕ, пĕр-пĕрне хисеплесчĕ, ăнланасчĕ, пĕр тĕллевлĕн ĕçлесчĕ. Вара мĕн палăртни пурнăçланĕ.

Пурне те çирĕп сывлăх, килĕшӳ, ăнлану, телей, ырату, вăрăм кун-çул сунатăп.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ
Р. ТИМОФЕЕВ.

## Халăх вăйĕ – пĕрлĕхре

Ноябрĕн 4-мĕшĕ – Турă Амăшĕн Хусанти турăшĕн кунĕ. 2005 çултан тытăнса ăна Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ тесе уявлаççĕ. Çак куна Раççей историйĕшĕн питех те пĕлтерĕшлĕ событие тĕпе хурса паллă тăваççĕ. 1612 çулта Кузьма Мининпа Дмитрий Пожарский ертсе пынипе халăх Мускава Польша интервенчĕсенчен хăтарнă. Çапла вара Аслă пăтрашăнчăк вăхăчĕ вĕçленнĕ.

Октябрĕн 22-мĕшĕнче (Григориан календарĕпе ноябрĕн 1-мĕшĕнче) Кузьма Мининпа Дмитрий Пожарский ертсе пынипе халăх ополченийĕн çыннисем Китай-города штурмпа илнĕ. Поляксен Речь Посполитая гарнизонĕ Кремле чакнă. Пожарский княç Китай-города Хусанти Турă Амăшĕн турăшĕпе кĕнĕ, çак çĕнтерĕве халалласа чиркӳ туса лартма шантарнă.

Интервентсен гарнизон командованийĕ капитуляцие алă пуснă. Хыççăнах Кремльтен Мускав боярĕсемпе ытти паллă çынсене кăларса янă. Тепĕр кунне (октябрĕн 27-мĕшĕнче) гарнизон парăннă. 1613 çулхи февраль вĕçĕнче земство соборĕ çĕнĕ патшана Романовсен династийĕн пĕрремĕш вырăс патшине Михаил Романова суйланă.

1649 çулта Алексей Михайлович патша указĕпе Хусанти Турă Амăшĕн турăшĕн кунне (Юлиан календарĕпе октябрĕн 22-мĕшĕ) патшалăх уявĕ тесе паллă тума тытăннă. Ăна висĕ ĕмĕре яхăн 1917 çулчченех уявланă.

Вырăс православи чиркĕвĕн календарĕпе çак кун 1612 çулта Мускавпа Раççее поляксенчен ирĕке кăларнине халалласа Хусанти Турă Амăшĕн турăшĕн кунне уявлаççĕ. Юлиан календарĕпе вăл октябрĕн 22-мĕшне килет. Иртнĕ ĕмĕрсем хушшинче Юлиан тата Григориан календарĕсем хушшинчи шайлашу чылай улшăннă май çак кун ноябрĕн 4-мĕшне куçнă. Шăпах ĕнтĕ çак куна – Юлиан календарĕпе октябрĕн 22-мĕшне, Григориан календарĕпе ноябрĕн 4-мĕшне – патшалăх уяв кунĕ тесе суйласа илнĕ.

Уявăн паянхи историйĕ çапларах. Халăх пĕрлĕхĕн кунне ноябрĕн 4-мĕшĕнче уявлама кирлине Раççейри Тĕнсен канашĕ 2004 çулхи сентябрь уйăхĕнче чĕнсе каланă. Ăна Патшалăх Думин ĕçпе социаллă политика комитечĕ ырланă. 2004 çулхи сентябрĕн 29-мĕшĕнче Мускавпа Пĕтĕм Раççей патриархĕ Алексий уява ноябрĕн 4-мĕшĕнче паллă тума кирлине официаллă каланă.

Октябрĕн 4-мĕшĕнче çак пуçарăва Думăри «Единая Россия» фракци ертӳçин çумĕ В. Богомолов ырланă.

2004 çулхи ноябрĕн 23-мĕшĕнче Патшалăх Думинче çĕнĕ саккун проектне тăратнă. Çав çулхи декабрĕн 27-мĕшĕнче ăна виççĕмĕш вулавпа йышăннă. Çапла вара вăл саккунлă вăя кĕнĕ.

Иыхрав

## Тыр-пул уявĕ

Кăçал районта Тыр-пул уявне ноябрĕн 8-мĕшĕнче Муркашра ирттереççĕ. Уява килекенсене Муркашра суту-илӳ ярмăркки кĕтет. Вăл 9 сехетрех ĕçлеме пуçлать. Кунта тĕрлĕ пахча çимĕç, улма-çырла, аш-какай туянма май килĕ. Муркашпа Мăн Сĕнтĕр райповĕсен ĕçченĕсем те тутлă апат-çимĕç сĕнĕç. Ял хуçалăх предприятийĕсемпе фермер хуçалăхĕсем ял тăрăхĕсемпе пĕрле хăйсен ĕçĕн результачĕсемпе паллаштарĕç. Уявра кунĕпех юрă-кĕвĕ янăрĕ. Хастаррисем хăйсене спорт вăййисенче тĕрĕслĕç. Ачасем те хăйсен пултарулăх выставкине пырса курма чĕнеççĕ. Вăл райадминистраци çуртĕн 1-мĕш хутĕнче иртет.

Уява савăнăçлă лару-тăрура 11 сехетре уçаççĕ. Кĕрхи ĕçсене пĕтĕмлетнĕ май ĕçре палăрнисене пĕтĕм халăх умĕнче чысласçĕ. Çĕн тырăран пĕçернĕ чи пысăк кукăле тутанма та чĕнеççĕ.

Пурте – Тыр-пул уявне!

# «Çынсем куллен кĕтеççĕ вĕсене»




*Çапла калаççĕ почта çыхăнăвĕн Мăн Сĕнтĕрти уйрăмĕн почтальонĕсем пирки ку тăрăхри ялсенче пурăнакансем. Чăн сăмахсем. Вулакансем патне хаçат-журнал та, çыру-бандероль те, тĕрлĕ тавар та, пенси укçине те вăхăтра çитерме тăрăшаççĕ вĕсем. Пур ялта йĕркеллĕ çул çук, автотранспорт та çӳреймест. Йĕпе-сапара та, çил-тăманра та çуран сахал мар утма тивет. Çитмелли çĕре вара çитесех пулать.*

*Сăн ӳкерчĕкре эсир Елена Ильина, Валерий Варюхин, Марина Сорокина, Владимир Димитриев, Елена Щеглова почтальонсене куратăр. Шăпах вĕсем пирки калаççĕ те ĕнтĕ куллен кĕтнĕ çынсем тесе. Хастар ĕçченсем çитес çул илсе тăма хаçат-журнал çырăнтарассипе те çине тăрса ĕçлеççĕ.*

**В. ШАПОШНИКОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Валентина Матвиенко пысăк хак панă

Чăваш Республикин кунĕсем

**Раççей Федерацийĕн Федераци Канашĕнче Чăваш Республикин кунĕсем вĕçленнĕ май Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев октябрĕн 30-мĕшĕнче Мускавра РФ Федераци Канашĕнче Федераци Канашĕн Председателĕпе Валентина Матвиенкопа тĕл пулнă.**

Тĕл пулу вăхăтĕнче Чăваш Енри хальхи экономикăпа социаллă пурнăç тĕлĕшĕнчи лару-тăрăва сӳтсе явнă, çавăн пекех Раççей парламенчĕн аслă палати республикăн законодательствăри тата обществăри хăш-пĕр пуçарăвĕсене йышăнассин ыйтăвĕсене тишкернĕ.

Валентина Матвиенко Чăваш Енĕн федераци шайĕнчи презентацийе лайăх енчен палăртнă, Чăваш Енĕн Федераци Канашĕнчи кунĕсем питех те анлă пулни, лайăх туйăм тата аса илӳ хăварни пирки каланă. «Çакă республикăн çитĕнĕвĕсем пирки те каласа пама май парать, кунпа пĕрлех регионти проблемăсем пирки те пĕлме май пур. Кун пек информаци пулни федераци субъекчĕсенчи лару-тăрăва тĕрĕс ăнланма тата малашлăхра эффективлăрах йышăнусем тума май парĕ», – палăртнă Раççей Федераци Пухăвĕн аслă палатин спикерĕ. Çавăн пекех вăл Чăваш Енре нацисем хушшинчи килĕшӳ çирĕп пулни, ку опыта ытти регионсенче те анлăрах сарма кирли пирки те пĕлтернĕ.

Михаил Игнатьев республикăна Федераци Канашĕнче хăйĕн çитĕнĕвĕсем пирки каласа пама май туса панăшăн тав тунă. «Эсир хăвăр та кĕпĕрнатăр пулнă, регионсен проблемисене аван ăнланатăр тата пире яланах пулăшма тăрăшатăр. Эпир çакна туйса тăратпăр», – палăртнă Михаил Васильевич.

Кунпа пĕрлех вăл çакна та аса илмесĕр хăварман. 2014 çула Раççейре Культура çулталăкĕ тесе палăртнă. Çак утăма питĕ вăхăтлă темелле. Пĕтĕм тĕнчере глобализаци процесĕсем анлăн сарăлса пынă вăхăтра ăс-хакăл, мораль, кăмăл-сипет хаклăхĕсене сыхласа хăварассин ыйтăвĕ питех те çивĕчленет.

Пĕтĕмĕшле хак парас пулсан Раççей Федерацийĕн Федераци Канашĕнче Чăваш Республикин октябрĕн 28 – 30-мĕшĕсенчи кунĕсем анлă та пĕлтерĕшлĕ иртнĕ, тĕрлĕ событисемпе пуян пулнă.

**Октябрĕн 28-мĕшĕнче** Чăваш Республикин вĕренӳ тата çамрăксен политикин министрĕ Владимир Иванов Федераци Канашĕн наука, вĕренӳ, культура тата информаци политикин комитечĕн ĕçне хутшăннă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл Чăваш Енĕн вĕренӳ системин аталанăвĕн малашлăхĕпе проблемисене çутатнă, федераци саккуне тухăçлă пурнăçа кĕртессипе Раççей патшалăх влаçĕн федераци органĕсем татса памалли ыйтусене палăртнă.

**Октябрĕн 29-мĕшĕнче** Чăваш Ен культура, национальноç тата архив ĕçĕсен министрĕ Вадим Ефимов Федераци Канашĕн федераци тытăмĕн, регионсен политикин, вырăнти хăй тытăмлăх тата Çурçĕр ĕçĕсен комитечĕн ларăвĕнче Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен юбилей кунĕсене федераци шайĕнче уявлассин темипе тухса каласнă.

(Вĕçĕ 3-мĕш стр.)

Сăмах – район администрацийĕн ĕçченĕсене

## Ĕçлекен çынна – тивĕçлĕ ĕç укçи

*Районти тĕрлĕ организаципе предприятире вăй хуракансене ĕç укçи вăхăтра тӳленипе, çавăн пекех пĕр уйăхри вăтам ĕç укçи шайĕпе тĕплĕнрех паллаштарма район администрацийĕн экономика тата агропромышленность комплексĕн аталанăвĕн пайĕн пуçлăхĕнчен* **Н. КОСТИНĂРАН** *ыйтрăм.*

– Саккунпа килĕшӳллĕн ĕçлекенсене ĕç укçи малалах палăртнă вăхăтра тата пĕр уйăхра икĕ хутчен тӳлемелле, пĕри – аванс шучĕпе, тепри – тĕп пай. Пĕтĕмĕшле илсен районти организацисемпе предприятисем çакна пăхăнаççĕ. Асăннă йĕркене пăсакансемпе тивĕçлĕ органсем ĕçлеççĕ, хăшнепĕрне явап тыттарни те пулнă.

Районти пĕр уйăхри вăтам ĕç укçи 17372,3 (январь – август кăтартăвĕпе) тенкĕпе танлашать, иртнĕ çулхи çак тапхăртипе танлаштарсан 126,8 процент (пĕчĕк предпринимательство субъекчĕсене шутламасăр) пулать. Мĕн пур сферăра ĕçлекенсен йышĕ пĕтĕмпе – 4918 çын, иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен 55 çын чакнă.

Кашни отрасле уйрăммăн тишкернĕ май çакă курăнать. Ял хуçалăхĕнче тăрăшакансем вăтамран 9679 тенкĕ ĕçлесе илнĕ е иртнĕ çулхи ку тапхăртинчен 0,6 процент пĕчĕкрех. Асăннă отрасльте вăй хуракансен шучĕ иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен 36 çын сахалрах.

Промышленность сферинчи тирпейлекен производствăра 667 çын (113,8 процент) вăй хурать, вĕсен вăтам ĕç укçи – 28168,9 тенкĕ.

(Вĕçĕ 4-мĕш стр.)

Районта

## Кирлĕ сĕнӳсем илчĕç

Кĕçнерни кун пирĕн районта ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Николай Николаев йышăну ирттерчĕ. «Единая Россия» парти председателĕн Д. Медведевăн регионти общественнăй йышăну пункчĕн ертӳçи Муркашсене тимлĕх уйăрса икĕ сехете яхăн уçă калаçăва хутшăнчĕ.

Николай Станиславович Федерацин Травматологи, ортопеди тата эндопротезировани центрĕн тĕп врачĕ пулнă май ун патне медицина ыйтăвĕсемпе чылайăн килчĕç. Йышăнăва çут çанталăка хӳтĕлес ыйтупа килнисем те пулчĕç, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннисене хваттерпе тивĕçтерес ыйтăва та çĕклерĕç. Кунсăр пуçне депутат пурăнмалли çуртйĕрпе çыхăннă ытти ыйтусем çине те конкретлă хуравсемпе кирлĕ сĕнӳсем пачĕ.

Йышăнăва район администрацийĕн пуçлăхĕпе Р. Тимофеевпа Муркашри тĕп больницăн тĕп врачĕ В. Данилов та хутшăнчĕç.

## Уявра – пĕрле

Çитес тунти кун паллă тăвакан Халăх пĕрлĕхĕн кунне халалласа районта тĕрлĕ мероприяти иртет, ытларахăшĕ – шкулсемпе библиотекăсенче. Ачасемпе аслисем кĕнеке куравĕсемпе паллашма та, тематика каçĕсене хутшăнма та пултараççĕ. Тунти кун Пĕтĕм Раççейри урока хутшăнса шкул ачисен уяв истрийĕпе тĕплĕнрех паллашма май пулать.

Уява халалласа ноябрĕн 4-мĕшĕнче Чăваш Енре пĕрлехи сывлăх кунĕ иртет. Республикăри Физкультурăпа спорт тата туризм министерстви спорт учрежденийĕсенче çак кун спорт услугисемпе тӳлевсĕр тивĕçтерме сĕннĕ. Çакна май Муркашри «Сывлăх» ФСК-ра уçă алăксен кунĕ иртет. Çак кунхи кунти спортзалта шкул ачисен баскетбол вăййисем пулаççĕ.

# Хыпкаланма сăлтав çук

Ача амăшĕн капиталĕ

***2007 çулта тата хыççăнхи çулсенче Раççейре иккĕмĕш ача çуралнă çемьесен ача амăшĕн капиталне тивĕçме право çуралчĕ. Унтанпа ачаллă çемьесене паракан çак пулăшу мелне пурте хăнăхса çитрĕмĕр темелле. Тăрук вара Раççей Финанс министерстви бюджета виçĕ çул малалла планланă май ача амăшĕн капиталĕ пирки калакан саккунра 2016 çула палăртнине аса илчĕç. Ку мĕне пĕлтерет тата малашне мĕн пулать? Паян эпир ку ыйтусем çине РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн управляющине Роза КОНДРАТЬЕВĂНА хуравлама ыйтрăмăр.***

**– Роза Алексеевна, ларутăрăва уçăмлатса парсамăр тархасшăн?**

– Федерацин «Ача пур çемьесене патшалăх пулăшăвĕн хушма мерисемпе тивĕçтересси çинчен» Саккунĕнче çемьере иккĕмĕш ача 2007 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 2016 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕччěнхи тапхăрта çуралсан е çав тапхăрта иккĕмĕш ачана усрава илсен, вĕсен ача амăшĕн капиталне илме право пулать тесе палăртнă. Апла пулсан ача çуралассин е усрава илессин тапхăрне кăтартнă. Ача амăшĕн капиталĕн сертификатне илессипе тата унпа усă курассипе вара вăхăта чикĕлени çук.

Акă амăшĕ иккĕмĕш ачана 2016 çулхи декабрьте çуратать тейĕпĕр. Унăн ача амăшĕн капиталне хăвăртрах илме нимĕн тума та хыпкаланма кирлĕ мар. Мĕншĕн тесен сертификат илмелли право сыхланса юлнă ĕнтĕ. Сертификата вăл 2017 çулта та, хыççăн та илме пултарать.

Халĕ тепĕр тĕслĕх пăхса тухар. Ача амăшĕн капиталĕн сертификатне илнĕ çемьере халĕ çурт-йĕр условийĕсене те лайăхлатма кирлех мар, ачисене вĕрентнĕшĕн уйăрма та иртерех тейĕпĕр. Пурăна киле вара, 2020 çул тĕлнелле, укçа-тенкĕ кирлĕ пулма пултарать. Çавăн чухне ача амăшĕн капиталне çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма е ачасене вĕрентнĕшĕн тӳлеме уйăрасси пирки заявлени çырас пулать те.

Çавăнпа та конкретлă кашни çемьере тĕплĕн шухăшласа йышăну тумалла, хыпкаланма сăлтав çук. Шел пулин те, 2016 çултан тытăнса ача амăшĕн капиталне пăрахăçлаççĕ текен сас-хура саракансем те пур. Кун пек суя сăмах чăнлăхпа килĕшсе тăмасть.

**– 2017 çулччен çуралнă ачасем тĕлĕшпе пĕтĕмпех ăнланмалла тейĕпĕр. Енчен те иккĕмĕш ача 2017 çулта çуралать пулсан? Ун пек чухне ача амăшĕн капиталĕ пулмĕ-и вара?**

– Ку ыйту ман пата мар, саккун хатĕрлекенсем патне. Тĕрĕссипе илсен ача амăшĕн капиталĕ пирки калакан саккунпа пăхнă çăмăллăх условийĕсемпе малашне усă курас кăмăллисем сахал мар пулчĕç. Чăваш Республикинче 2007 çултан тытăнса ача амăшĕн капиталĕн сертификатне 47 пин ытла çемье илнĕ. Çав тапхăрта унăн виçи 250 пин тенкĕрен тытăнса 409 пин тенкĕне яхăн çитрĕ. Пирĕн республикăра пурăнакансем çуррине яхăн ача амăшĕн капиталĕпе усă курчĕç те ĕнтĕ, пĕтĕмĕшле сумма 8,4 млрд тенкĕпе танлашать.

Ачасем çураласси те ӳсрĕ. Иртнĕ çул Чăваш Енре 17,5 пин ача çуралнă. Ку вăл 2007 çулхинчен 18 процент нумайрах. Çемьере иккĕмĕш тата хыççăнхи ача çураласси вара 45 процентран 56 процента çитрĕ.

Демографи кăтартăвĕсем лайăхланма тытăннине тата çемьесемшĕн патшалăхăн çак пулăшу мелĕ пĕлтерĕшлĕ пулнине шута илсе ача амăшĕн капиталĕ пирки калакан саккуна тăсасса шанас килет.

**– Çемьесем ача амăшĕн капиталĕпе ытларах чухне мĕн валли усă кураççĕ-ха?**

– Ытларахăшĕ хăйсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма тăрăшать. 25 пин ытла çемье ача амăшĕн капиталне пĕтĕмпе 8,3 млрд тенкĕ çав тĕллевпе уйăрнă. Нумайăшĕ унпа çурт-йĕр туянма е тума илнĕ кредитсене саплаштарнă. Çемьесем çавăн пекех капиталпа çурт-йĕр туянаççĕ е ăна çурт-йĕр тума пая кĕме уйăраççĕ, харпăр хăйĕн пурăнмалли çурт-йĕрне тăваççĕ е реконструкцилеççĕ (вăл шутра подряд организацийĕсене явăçтармасăр та), çурт-йĕр тума е туянма кредит илнĕ чухне пуçламăш взноса тӳлеме усă кураççĕ.

Çавна та палăртса хăвармалла. Кăçалтан тытăнса ача амăшĕн капиталне пурăнмалли çурт-йĕр туянма тата тума илекен кредитсемпе займсене саплаштарма усă курассипе законодательство йĕркисене çирĕплетнĕ. Халĕ вĕсене банксем, потребитель кооперативĕсем тата микрофинанс организацийĕсем, кунсăр пуçне тата ипотека килĕшĕвĕпе обязательствăсене тивĕçтерекен ытти организацисем кăна пама пултараççĕ. Кунсăр пуçне заем укçи-тенкине алăран мар, заемщикăн банк счечĕ çине кăна куçарса пама тивĕç. Законодательствăри çак улшăнусем пĕтĕмпех ача амăшĕн капиталĕпе тĕллевсĕр усă курассине чарса лартассипе çыхăннă.

**– Çемьесем ача амăшĕн капиталĕпе хăйсен ачисене вĕрентме усă курассипе лару-тăру мĕнле шайра-ши?**

– Пирĕн республикăра хăйсен аслă çулхи ачисене аслă вĕренӳ заведенийĕсемпе колледжсенче вĕрентнĕшĕн тата шкул çулне çитменнисене ача сачĕсене çӳретнĕшĕн тӳлеме 700 ытла çемье пĕтĕмпе 22 млн тенкĕпе усă курнă.

Ача амăшĕн капиталне çемьери кирек хăш ачана та вĕрентнĕшĕн тӳлеме уйăрма май пур. Вĕренӳ тапхăрĕ пуçланнă тĕле ача 25 çул тултарманни кăна пĕлтерĕшлĕ. Вĕрентӳ услугипе тивĕçтерме право пур пулсан Раççейри кирек хăш вĕренӳ учрежденине те суйласа илме пулать. Кунсăр пуçне ача вĕреннĕ тапхăрта общежитире пурăннăшăн та ача амăшĕн капиталĕ шучĕпе тӳлеме май пур. Капиталпа ача вĕренӳ курсĕсене çӳренĕшĕн тӳлеме те усă курма ирĕк панă. Калăпăр, ют чĕлхесен курсне çӳрет пулсан. Çавна валли патшалăх аккредитацине илнĕ вĕренӳ заведенийĕпе килĕшӳ тумалла.

2011 çултан тытăнса ача амăшĕн капиталĕпе ачана муниципалитетăн е харпăр хăйĕн ача садне çӳретнĕшĕн те тӳлеме ирĕк панă. Пирĕн республикăри 133 çемье ку мелпе активлă усă курать. Çак тапхăрта ачасене садиксенче тытса усранăшăн ача амăшĕн капиталне 1 млн. тенкĕне яхăн уйăрса панă та ĕнтĕ. Вĕсен тĕслĕхĕпе усă курас тетĕр пулсан Пенси фондне килĕшӳ тăратас пулать. Унта ача садне, тӳлев виçине тата укçа куçармалли реквизитсене кăтартни пулмалла. Заявлени çырса панăранпа икĕ уйăх иртиччен пĕрремĕш взнос куçĕ те. Малашне вара взнос заявленире кăтартнă вăхăтра куçса тăрĕ.

**– Роза Алексеевна, ача амăшĕн капиталне хăйсен пулас ĕç пенсийĕн пухăнакан пайне пысăклатма уйăракан амăшĕсем пур-и-ха тата?**

– Çĕр-шывĕпе илсен кун пеккисем 2 пин çынна яхăн. Чăваш Енре кун пек заявленисем пулман. Кунта шикленмелли нимĕн те çук. Малтан ача амăшĕн капиталне пенсин пухăнакан пайне пысăклатма хывма, кайран вара укçа-тенкĕне урăх тĕллевпе уйăрма та ирĕк пур. Укçа-тенкĕ суммине инвестициленĕ май унăн виçи ӳссе пырĕ кăна. Çуллен ирттерекен планпа пăхнă индексацирен вăл яланах пысăкрах пулать.

Халĕ вара юлашкинчен ача амăшĕн капиталĕпе усă курнă, анчах пысăках мар сумма юлнă çемьесем тĕлĕшпе каласа хăварасшăн. Ача амăшне пенси пама тытăннă чухне юлнă суммăна пенсин пухăнакан пайĕнче шута илме пултараççĕ. Ун чухне ăна пухăнакан пенси шучĕпе тӳлĕç.

**– Ăнлантарса панăшăн тавтапуç.**

**Елена ИЛЬИНА калаçнă.**

Семинар-канашлу

# Саккунлăхпа йĕркелĕх – ăнăçу никĕсĕ

***Октябрĕн 29-мĕшĕнче Муркаш район судĕнче республикăри район сучĕсен судйисемпе миравай судйисем пухăнчĕç. Çывăхри районсен пĕрле ирттерекен семинар канашлăвĕнче обществăри саккунлăха тивĕçтерессин ĕçченĕсем хăйсен кăçалхи тăхăр уйăхри ĕçне пĕтĕмлетрĕç.***

Канашлу ĕçне район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев та хутшăнчĕ. Ростислав Николаевич пухăннисене районăн экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн кăтартăвĕсемпе паллаштарчĕ, саккунлăха, обществăри право йĕркелĕхне тивĕçтерекен органсем ытти структурăсемпе тачă çыхăнса ĕлени, профилактика мероприятийĕсем ирттересси çине ытларах тимлĕх уйăрни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртрĕ.

Суд ĕçченĕсем малтанах республикăри район (хула) сучĕсемпе миравай судсен кăçалхи январь – сентябрь уйăхĕсенчи ĕç итогĕсене пĕтĕмлетсе тишкерчĕç. Ку ыйтупа Чăваш Республикин Аслă Сучĕн председателĕ Николай Порфирьев тухса калаçрĕ.

Республика Суд департаменчĕн управленийĕн ĕçĕ-хĕлĕ çинче управлени пуçлăхĕ Валерьян Петров чарăнса тăчĕ.

Чăваш Республикин Аслă сучĕн председателĕн çумĕ Вера Бельцева хăйĕн сăмахĕнче пĕрремĕш инстанци судĕнче гражданла ĕçсем пăхса тухнă чухне гражданла-процессуаллă нормăсемпе усă курассин, Чăваш Республикин сучĕсен гражданла ĕçсене пăхса тухса тунă йышăнăвĕсене пăрахăçланине е улăштарнине тата ытти ыйтусене çутатрĕ, миравай судьясемпе аппеляци инстанцийĕн сучĕ гражданла ĕçсем пăхса тухнă чухне тунă йăнăшсене тишкерчĕ.

Семинар-канашлура кулленхи ĕçпе çыхăннă ытти ыйтусене те пăхса тухрĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Çĕнĕ кĕнеке

# Вун пĕрмĕш том пичетленсе тухрĕ




Чăваш патшалăх гуманитари институчĕпе Чăваш кĕнеке издательстви тачă çыхăнса ĕçлесе пыни татах тепĕр ӳсĕм тума май пачĕ. Çак кунсенче «Чăваш халăх пултарулăхĕ» серипе пичетленсе пыракан кĕнекесен черетлĕ томĕ пичетленсе тухрĕ.

Ку серие тавра пĕлӳçĕсемпе историксем, педагогсем, студентсем тата шкул ачисем аван пĕлеççĕ. «Тавралăх халапĕсем» – чăваш фольклорĕн нумай томлă пуххин черетлĕ 11-мĕш кĕнеки. Унта унччен пичетленнĕ тата архив материалĕсем вырăн тупнă. Кĕнекере тĕрлĕ вырăнсен, объектсен географи ячĕсем, йăла-йĕрке ирттерекен вырăнсем, улăп тăприсем пирки калакан халапсем, ытти интереслĕ материал чылай.

Кĕнеке чăваш халăх фольклорĕпе, этнографийĕпе тата историйĕпе интересленекенсемшĕн усăллă пуласса шанас килет. Кĕнеке хатĕрлекенĕ – философи наукисен кандидачĕ, гуманитари наукисен Чăваш патшалăх институчĕн наукăн аслă сотрудникĕ Ольга Терентьева. Кĕнекене 1000 экземпляр пичетлесе кăларнă.

# Автотранспорта регистрацилесси ансатланать

Водительсем валли

Октябрĕн 15-мĕшĕнчен тытăнса автомобиль транспортне регистрацилессипе çыхăннă çĕнĕ регламент пурнăçа кĕчĕ. Чи малтанах ку вăл автомашина хуçисен вăхăтне перекетлессипе çыхăннă. Туса хатĕрлемелли документсен шучĕ сахалланать. Кунпа пĕрлех администраци процедурисем пирки те çавнах каламалла. Çапла ăнлантарса пачĕç пире çĕнĕлĕхсем пирки патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕнче.

Сăмахран, транспорт хатĕрне регистрацилеме сирĕнтен заявление 15 минутран кая юлмасăр йышăнма тивĕç. Транспорта регистрацилеме унччен 3 сехет пăхса хунă пулсан, халĕ вăл 1 сехетпе танлашать. Çав хушăра управлени сотрудникĕсем автомашинăна пăхса тухма, пур сведенисене те тĕрĕслеме, регистрацилесси е регистрацилес марри пирки йышăну тума, документсемпе регистраци паллине пама тивĕç.

Татах тепĕр çĕнĕлĕх. Эсир автомашинăна е ытти транспорт хатĕрне сутас терĕр пулсан, малашне ăна регистраци учетĕнчен кăларма кирлĕ мар. Çакна транспортăн çĕнĕ хуçи ăна регистрациленĕ чухне тăвĕç. Çитменнине автотранспорт хуçи улшăнать пулин те, транспортăн патшалăх регистраци палли пĕрлех юлать. Енчен те вара транспортăн унччен хи хуçи хăй килĕштернĕ регистраци паллине хăйĕнчех хăварасшăн пулсан, унăн ятарлă заявлени çырма тивет. Паллă ĕнтĕ, ку вăл тӳлевсĕрех пулмасть.

Автомашинăна вара кирек хăш хулара та регистраци учетне тăратма май пулĕ. Калăпăр эсир транспорт хатĕрне Мускавра туяннă пулсан, ăна учета тăратас тесен Мускава кайма тивмĕ. Сирĕн автомашинăна кирек хăш хулара та учета тăратĕç.

Кунсăр пуçне автотранспорт хуçи малашне çухатнă е вăрласа кайнă номерсен копийĕсене хăех заказ пама пултарĕ. Патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх хăйсен автомашинисен регистраци номерĕсене çухатакансем тĕл пулмаççĕ мар. Малашне вĕсем ирĕклĕнех ятарлă мастерскоя кайса номер дубликатне тутарĕç.

Енчен те вара ырă мар шухăшлă çын вăрланă е тупнă номерпе лайăх мар тĕллевпе усă курас пулсан? Кун пирки пире çапла хурав пачĕç. Автомашина хуçи халĕ те ГИБДД уйрăмне пырса даннăйсене улăштарттарма, çĕнĕ номер илме пултарать.

Сăмах май нумаях пулмасть РФ Патшалăх Думине çĕнĕ саккун проектне пăхса тухма тăратнă. Вăл автомобиль номерĕсене вăрлакансем тĕлĕшпе айăплава çирĕплетессипе çыхăннă. Лару-тăрăва кура айăплă çынна 300 пин тенкĕ таран штрафлама, 2 çул таран юсанмалли ĕççене явăçтарма е тата 4 çул таран ирĕкрен те хăтарма пултарĕç.

**Пичет материалĕсемпе усă курса В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

Çĕнĕлĕх

# Хамăрăн куçман пурлăха хӳтĕлетпĕр

Кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа харпăрлăх хуçисен хăйсен куçман пурлăхне хӳтĕлеме майсем анлăланчĕç. Вĕсем асăннă пурлăх тĕлĕшпе хăйсемсĕр нимĕнле регистраци ĕçĕсем те туса ирттерме юраманни пирки Росреестра заявлени çырса пама пултараççĕ. Çак çĕнĕлĕх хăйсен пурлăхне сыхласа хăварма,ултавçăсенчен хӳтĕленма май парать.

Ку çĕнĕлĕхе вăхăт ыйтнипе пурнăçа кĕртнĕ темелле. Управление ку таранччен те кун йышши заявленисем килкеленĕ, анчах та вĕсем юридици вăйĕнче шутланман. Халĕ вара кун пек чухне документсене доверенноçпа урăх çын илсе пырать пулсан вĕсене каялла тавăрса парĕç кăна.

«Росреестрăн Чăваш Республикинчи управленине ватă çынсем сахал мар пыраççĕ. Вĕсем пурлăх правине çирĕплетекен документсене хатĕрлеме специалистсене хăйсем патне чĕнеççĕ. Ку услугăпа эпир тӳлевсĕрех тивĕçтеретпĕр», – каласа парать Управлени ертӳçи Ирина Пудова.

Халĕ вара çыннăн хватерне регистрацилессипе çыхăннă документсене йышăннă чухне хуçин асăрхаттару заявленийĕ пур пулсан, хăйĕнсĕр нимĕнле регистраци ĕçĕ те пурнăçламĕç.

Росреестрăн Чăваш Республикинчи управленийĕ тепĕр хут аса илтерет. Куçман пурлăх хуçисем хăйсен пурлăхĕпе çыхăннă регистраци ĕçĕсене хăйсем хутшăнмасăр туса ирттерме юраманни пирки заявлени çырса пама пултараççĕ. Чи малтанах ку вăл хăйсен пурлăхнеултавçăсем çавăрса илессинчен шикленекенсене пырса тивет. Калăпăр, паспорт е хватер документчĕсене çухатнă пулсан. Заявление пурлăх хуçисем хăйсем çырса параççĕ, ăна ытти çынсенчен йышăнмаççĕ. Çапла вара Росреестрта асăрхаттару заявленийĕ пулать.

Акă уйрăм çын Росреестра доверенноçпа пырать тейĕпĕр. Вăл çурт-йĕр туяннине е сутнине регистрацилеме ыйтать. Росреестрта вара ку харпăрлăх объекчĕпе унăн хуçисĕр нимĕнле ĕç те туса ирттерме юраманни пирки çырса хуни пур. Регистраторсем документсене каялла тавăрса парĕç кăна, нимĕнле регистраци ĕçĕ те пурнăçламĕç.

Кунта пĕлтерĕшлĕ самант пур. Саккунлă вăя кĕнĕ суд йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн е суд пристав-исполнителĕн требованийĕпе регистраци ĕçĕсем туса ирттернĕ чухне вара ку объект тĕлĕшпе çыннăн заявлени пурри чăрмав пулса тăраймасть.

**Росреестрăн Чăваш Республикинчи управленийĕн пресс-службы.**

**Саламлатпăр**

Пирĕн хисеплĕ те хаклă çыннăмăра – Вăрманкас Хачăк ялĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ Пăсăрман ялĕнче пурăнакан **Анна Семеновна КРЫСИНĂНА** 70 çулхи юбилей ячĕпе сума суса чун-чĕререн саламлатпăр. Эсĕ пирĕншĕн пуриншĕн те хĕвелпе уйăх пек, ĕмĕр тăршшĕпех пирĕн çула çутатса пыратăн. Эсĕ пуртан эпир пуян, телейлĕ, савăнăçлă. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн, ялан ăс парса пулăшнăшăн. Сана малашнехи пурнăçра та çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, телей сунатпăр.
Ан чирле, ан ватăл нихăçан, Эс пурри пире савăнтарать,
Пул хаваслă, кăмăллă ялан. Пурăнма вăй-хал парса тăрать.

**Саламлаканĕсем: юратнă мăшăрĕпе хĕрĕсем, кĕрĕвĕ, мăнукĕсем, тăхлачи, пиччĕшĕпе аппăшĕсем.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра – Мăн Сĕнтĕрте пурăнакан **Михаил Егорович ИВАНОВА** 85 çулхи юбилей ячĕпе чĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Эпир сана юрататпăр, хисеплетпĕр. Малашнехи пурнăçра çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, иксĕлми телей, канлĕ ватлăх сунатпăр.

**Салампа: хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем, мĕн пур сывăх тăванĕсем.**



Юратнă ывăла, мăшăра, аттене, кукаçие, пиччене, шăллăма – Шарпаш ялĕнче пурăнакан **Александр Николаевич МАКСИМОВА** 50 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Сывлăху санăн çирĕп пултăр, çемьере килĕшӳ, ăнлану сунатпăр. Ĕмĕтленнине пурнăçлама вăй-халу çитсе пытăр. Эпир сана юрататпăр, чун-чĕререн хисеплетпĕр, эс пурришĕн чунтан савăнатпăр. Умри çулу санăн яланах анлă та çутă, такăр пултăр.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, ывăлĕ, хĕрĕ, кĕрӳшĕ, мăнукĕ тата çывăх тăванĕсем.**

**Чăваш Республикин кунĕсем**

## Валентина Матвиенко пысăк хак панă

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

**Октябрĕн 29-мĕшĕнче** Чăваш Республикин Раççей Федерацийĕн Федераци Пухăвĕн Федераци Канашĕнчи кунĕсен шайĕнче федерацин аграрипе апат-çимĕç политикин тата çут çанталăкпа усă курассин комитечĕн анлă ларăвĕ иртнĕ, унта чăваш аграрийĕсен министрĕ Сергей Павлов «ВТО условийĕсенче Чăваш Республикинчи экологи хăрушсăрлăхĕ тата агропромышленноç комплексне аталантарасси» темăпа доклад туса панă.

**Октябрĕн 29-мĕшĕнче** Чăваш Республикин экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илӳ министрĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Владимир Аврелькин Федераци Канашĕн экономика политикин комитечĕн ларăвĕнче тухса каласнă.

**Октябрĕн 30-мĕшĕнче** РФ Федераци Пухăвĕн Федераци Канашĕнче Чăваш Ен презентацийĕн выставкине официаллă лару-тăрура уçнă. Унта Федераци Канашĕн Председателĕ Валентина Матвиенко тата Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та хутшăннă.

# Сиенлĕ информацирен хӳтĕлемелле

**Ачасем тата Интернет**

Ачасенчен нумайăшĕ Интернета ашшĕ-амăшĕнчен ыйтмасăрах кĕрет. Интернет пĕр енчен ăстăна аталантарма та, пĕлĕве тарăнлатма та пулăшать, тепĕр енчен – унта ачана сиен кӳрекен информаци те чылай. Çакăн пирки, шел пулин те, пур ашшĕ-амăшĕ те шутламасть.

Ачасене сиен кӳрекен информацирен хӳтĕлессине патшалăх хăйĕн задачи тесех палăртрĕ. Анчах та çак задачăна татса пама патшалăхăн кăна мар, обществăлла организацисен те, бизнесăн та, йĕркене сыхлакан органсен те хăйсен вăйĕсене пĕрлештерсе тăрăшмалла. Пĕлтĕрхи сентябрь уйăхĕнче Федерацин «О защите детей от информации, причиняющей вред их здоровью и развитию» саккунĕ вăя кĕчĕ. Ун хыççăнах ачасене сиен кӳрекен информаци тытса тăракан сайтсен пĕрлехи реестрĕ ĕçлеме тытăнчĕ. Ятарлă «хĕрӳ линисем» те ĕçлеççĕ. Виçĕ çул ытла ĕнтĕ Раççейре «Дети онлайн» пулăшу линийĕ те ĕçлет. 8-800-25-000-15 номерпе шăнкăравласан ачасене те, аслисене те Интернетри хăрушсăрлăх тĕлĕшпе эксперт-сем пулăшу параççĕ.

Специалистсем 10 çула çитмен ачасене ытларах контрольлемелли-не калаççĕ. Ачасем «кирлĕ мар» сайтсене кĕресрен Интернет-хăрушсăрлăх мелĕсемпе усă курма пулать, анчах та май пур чух яланах ачапа пĕрле ларнине нимĕн те çитмест. Çапла вара ачана Интернетра усăллă информацие кăна мар, сиенли те туллиех пуррине ăнлантармалла. Кунпа пĕрлех ят е хушамат тата ытти даннăйсене ыйтакан сайтсене кирек хăш ӳсĕмри ачан та хăйĕн çинчен е çемье çинчен пĕлтерекен информацие çырмалла маррине лайăх пĕлмелле.

Ачапа яланах пĕрпĕрне шанса калаçни Интернетри хăрушлăх пирки калаçнă чухне те пулăшать. Ачан ыйтăвĕсене май пур таран туллин хуравлама тăрăшмалла, унсăрăн вăл шăпах хăрушă сайтсене «лекме» пултарать те. Паллах, ача хăш сайта кĕнине асăрхамалла. Компьютера тĕрлĕ программăсем вырнаçтарассине те ачан ашшĕ-амăшĕн ирĕкĕпе кăна вырнаçтармаллине йĕркене кĕртмелле.

Аслăрах ачасем тĕрлĕ сетьсенче «юлташсемпе» хутшăнаççĕ. Вĕсемпе интересленме те ан ӳркенĕр. Ачасене электрон почтăна килекен пустуй хыпарсене хуравсăр хăвармаллине ăнлантарăр. Интернет урлă тавар туянассине те ачасем сирĕнпе канашламасăр ан пурнăçлаччăр.

Тата тепĕр кирлĕ сĕнӳ: компьютер ачан çывăрмалли пӳлĕмĕнче мар, пурте ирĕклĕн кĕме пултаракан пӳлĕмре пулмалла.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Чăн-чăн арçынсен тивĕçĕ

**Çара – контрактпа**

ЧР Çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсен уйрăмĕнче хальхи вăхăтра призывниксемпе кăна мар, çара контракт мелĕпе каяс текенсемпе те тимлесех ĕçлеççĕ. Арçынсен Раççей Федерацийĕн Шалти ĕçсен министерствин шалти çарĕсенче тата хĕç-пăшаллă çарсенче çар ĕçне пурнăçлама май пур.

Контракт мелĕпе çара каяс текенсемпе яланах калаçу ирттереççĕ, документсем хатĕрлессипе тата пурăнакан вырăнта медицина тĕрĕслевне тухмалли пирки ятарлă пунктра (Тĕп çар округĕнче контрактпа çара каяс текен гражданcене суйламалли пункчĕ Шупашкарта Пирогов урамĕн 10 А çуртĕнче вырнаçнă, тел.: 45-20-97) ăнлантарса параççĕ.

Кăçалхи ноябрь пуçламăшĕ тĕлне çара контракт мелĕпе каяс текенсем пурĕ 30 заявлени çырса панă, вĕсенчен 25-шĕ çар часĕсене çитсе контракт çырнă ĕнтĕ. Ытларахăшĕ – Раççей Федерацийĕн Оборона министерствин çар чаçĕсенче çар ĕçне пурнăçлать, ыттисем – Шалти ĕçсен министерствин шалти çарĕсенче.

Çак вăхăтра çара контрактпа каяс текен виçĕ çынна, вĕсем административлă йĕркене пăснă тата судпа айпланнă пулнăран, документсем йĕркелеме пулăшрăмăр.

Çара контрактпа каяс текенсем хальхи вăхăтра çак çар чаçĕсенче çар ĕçне пурнăçлаççĕ: Таджикистанри Душанбе хулинче вырнаçнă 01162 – (201 ВБ) çар чаçĕнче, Ингушети Республикинчи 64670 – (291 абр) чаçре, Чечен Республикинчи Ханкала поселокĕнчи 45767 (инженерсен уйрăм батальонĕ) чаçре, Самара облаçĕнчи Рощинский поселокри 90600 – (15 омсбр МС) чаçре, Тольятти хулинчи 21208 (3 ятарлă бригада) чаçре тата Ульяновск хулинчи 73612 – (десантсен 31 штурм бригади) чаçре.

Контрактпа çара кайма çар тивĕçне пурнăçлама юрăхлă, сывлăх тĕлĕшпе «А» тата «Б» категорие кĕрекен 30 çултан кĕçĕнрех çын пулмалла. Судпа айăпланманни тата административлă йĕркене пăсманни, пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ илни (11 класс), пуçламăш е вăтам професси пĕлĕвне илни – çаксем те çара контрактпа кайма кирлĕ условисем. Призывпа çар хĕсметĕнче пулни, çар учечĕн специальноçне алла илни вырăнлă. Кунсăр пуçне «С», «Д», «Е» категориллĕ водитель удостоверенийĕ пурри те лайăх кăна.

Контрактпа çара кайнисен укçатенкĕ ыйтăвĕ те, пурăнмалли вырăн тĕлĕшпе те ыйту хăйне май татăлать. Контрактпа çар ĕçне пурнăçлакан звание кура уйăхсерен 23–33 пин тенкĕ илсе тăрать. Контрактниксен кубрик майĕпе йĕркеленĕ казармăра пурăнма та, социаллă найм мелĕпе хваттерте пурăнма та пулать. Виçĕ çултан иккĕмĕш контракт çырсан çар ипотекипе усă курма май пур. Аслă шкулсенче вĕренесси те ыйту мар. Контрактпа çар ĕçне пурнăçлакансем куçăмсăр майпа вĕренме, экзамен тытнă вăхăтра отпуск илме пултараççĕ, черетлĕ отпусксем те, ытти çăмăллăхсем те пур.

Çара контрактпа каяс текенсене çар комиссариачĕн Муркашра вырнаçнă уйрăмĕнче яланах кĕтетпĕр, ыйтусем çине тулли хурав паратпăр. Кĕрсе тухăр е 62-3-84, 62-3-50 номерсемпе шăнкăравлăр.

**А. КОЧУРОВ,**
**ЧР Çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсен уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

# «М» категори – вунултă çултан

**Саккун**

***Федерацин «О безопасности дорожного движения» саккунне кĕртнĕ хăшпĕр улшăнусем ноябрьте вăя кĕреççĕ. Кун пирки тĕплĕнрех каласа пама патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн районти тĕп инспекторĕ С. ИВАНОВ кăмăл турĕ:***

– Чăнах та çул-йĕр хăрушсăрлăхĕ тĕлĕшпе кăçал чылай улшăну вăя кĕчĕ. Асăннă саккун пирки калас пулсан хăш-пĕр улшăнусем ноябрĕн 8-мĕшĕнче вăя кĕреççĕ.

Мопедпа тата çăмăл квадрациклпа çӳреме «М» категори ĕçе кĕрет. Скутерпа е мопедпа çӳреме ирĕк паракан правана 16 çул тултарсан тин илме май пур. Кирек мĕнле категориллĕ права пуррисен «М» категори уçма тата экзамен тытма кирлĕ мар.

Саккун халĕ пур категорисен йышне вĕсен подкатегорийĕсене кĕртет. Çапла вара водитель удостоверенийĕнче «А1», «В1», «С1», «Д1», «С1Е», «Д1Е» паллăсем те пулаççĕ.

«А1» подкатегори пурри 11 кВт-ран пĕчĕкрех хăватлă мотоциклпа çӳреме ирĕк парать, каласа хăвармалла – 16 çул тултарнă хыççăн.

«В1» – 18 çул тултарнисене трициклпа е квадрациклпа çӳреме ирĕк парать.

«С1» – 18 çул тултарнă хыççăн 3,5 – 7,5 тонна таякан автомашинĕсемпе çӳреме ирĕк парать.

«Д1» подкатегорие 21 çул тултарнă хыççăн кăна тивĕçме пулать. Унпа пассажирсене турттаракан лармалли 9–16 вырăнлă транспортпа çӳреме ирĕк пур.

Çул-йĕр çинче асăрханулă пулăр, саккуна пăхăнăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Ача садĕнче**

# Çут çанталăка пĕр кунтах ăнланаймăн



Хальхи вăхăтра шкулчченхи вĕренӳ учрежденийĕсене çӳрекенсене тăван тавралăха юратма, упрама, унăн илемне курма вĕрентесси тĕпре. Çавăнпа та «Солнышко» ача садĕнче вăй хуракансем çыннăн экологи культурине мĕн пĕчĕкренех йĕркелемеллинче иккĕленмеççĕ. Кăçал Тавралăха хӳтĕлемелли çулталăк пулнă май эпир ку тĕлĕшпе уйрăмах тăрăшатпăр.

Ачан çут çанталăка ăнланас туйăм пулмалла, ăна çут çанталăк тĕлĕшпе конкретлă пĕлӳ кăна пани çителĕксĕр тесе шутлатпăр эпир. Çут çанталăка ăнланма пĕлни вара пĕр кунта аталанакан туйăм мар. Çавăнпа та кашни кунах ачасемпе çут çанталăк пулăмĕсем çинчен калаçатпăр, урама усăлма тухсан сăнавсем иртеретпĕр, экологипе сыхăннă дидактика вăййисем йĕркелетпĕр.

Хĕвел пăхать-и, çумăр çăвать-и, кĕрхи çулçă пăшăлтатать-и – ачасене пĕтĕмпех интереслентерет, тĕрлĕ ыйту çуратать. Ачасем хăйсем мĕн курни-илтни çинчен каласа пама, ӳкерсе кăтартма юратаççĕ. Акă иртнĕ кĕр уявĕнче те пирĕн ачасем кĕрхи илемпе пуянлăх çинчен юрăсем шăрантарчĕç, сăвăсем вуларĕç. Ашшĕ-амăшĕ хăйсен ачисен пултарулăхне курса савăнчĕ.

Экологи воспитанийĕ парассинче ашшĕ-амăшĕн тӳпи те курăмлă пулмалла. Вĕсем ачасемшĕн тĕслĕх пулса тăмалла. Пирĕн ашшĕ-амăшĕсем ачасемпе пĕрле шăнкăрч вĕллисем ăсталаççĕ, чечек, йывăç лартаççĕ, сыраш(?) сырăшсем туса çакаççĕ, çут çанталăк илемне сăнласа сăн ӳкерчĕксен куравĕсене йĕркелеççĕ. Хальхи вăхăтра ача садĕне сăн ӳкерчĕксен «Вот так чудо-урожай!» конкурсĕ иртет.

**О. ПРОКОПЬЕВА,**
**аслă воспитатель.**

**Спорт**

# Тĕнче призерĕ



Муркашри В. Егорова ячĕллĕ спорт шкулĕнчен ку таранччен чылай паллă спортсмен тухнă, вăл шутра спортăн пирĕн тăрăхра анлă сарăлман енĕсемпе те.

Акă нумаях пулмасть Китайри Вуси хулинче юниорсен тата кадетсен ухăран переспесс... пересси(?) тĕнчере мала тухассишĕн иртнĕ ăмăртăвĕсем вĕçленчĕç. Раççейĕн пĕрлештерĕн командинче Чăваш Ен хĕрĕ Елена Елизарова та пулнă. Юниорсен категорийĕнче пирĕн команда кĕмĕл призер пулса тăнă.

Елена шăпах пирĕн районти В. Егорова ячĕллĕ спорт шкулĕнчен (халĕ В. Егорова ячĕллĕ Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен 1 номерлĕ ятарлă шкулĕн филиалĕ шутланать) тухнă. ЧР тава тивĕçлĕ тренерĕ Иван Воробьев патĕнче утăм хыççăн утăм ăсталăха туптанă. Çакăн пек пысăк çитĕнӳ патне çул пĕр тикĕс те тумхахсăр пулман паллах, анчах та тренер ачана вăхăтра интереслентерме пултарни тата Еленăн çирĕп кăмăлĕ çĕнтерĕ. Е. Елизарова районти спорт шкулĕ хыççăн Олимп резервĕсен училищине вĕренсе пĕтерчĕ, халĕ малалла аслă пĕлӳ илет.

Çакăн пек хастар çамрăксемпе В. Егорова ячĕллĕ спорт шкулĕ те, пирĕн район та тивĕçлипех мухтанма пултараççĕ. Тин кăна спорт çулĕ çине тăнисен вара кун пеккисенчен тĕслĕх илмелле.

**Н. ДИМИТРИЕВА.**

Сăмах – район администрацийĕн ĕçченĕсене

# Ĕçлекен çынна – тивĕçлĕ ĕç укçи

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Электроэнергипе, газпа, шывпа тивĕçтерессинче 173 çын (98,9 процент) тăрăшать, вăтам ĕç укçи – 19145,4 тенкĕ е 109,5 процент.

Çурт-йĕр çĕклес сферăра тимлекенсен вăтам ĕç укçи 35874,8 тенкĕпе (126,1 процент) танлашнă, 181 çын вăй хунă.

Суту-илӳре, йăлари техникăна, автотранспорт юсассинче 551 çын тимлет, ĕç укçи – 17150 тенкĕ (115,3 процент).

Ресторан тытăмĕнче 147 çын вăй хурать, вăтам ĕç укçи – 13400 тенкĕ. Укçа-тенкĕпе çыхăннă ĕç-хĕлте 71-ĕн тимлеççĕ, ĕç укçи 20316,7 тенкĕпе танлашать.

Куçман пурлăхпа ĕçлес, тĕрлĕ услугăпа тивĕçтерес сферăра тимлекенсен вăтам ĕç укçи – 13714,2 тенкĕ е 99,7 процент, 37 çын тăрăшать.

Патшалăх управленинче тата çар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтерес, социаллă страховани отраслĕнче 325 çын тăрăшать, вĕсен вăтам ĕç укçи 23324,3 тенкĕпе (110,8 процентпа) танлашать.

Вĕренӳ учрежденийĕсенче 991 çын (86,2 процент) вăй хурать, вăтам ĕç укçи – 13773,4 (139,4 процент) тенкĕ.

Сывлăх сыхлав учрежденийĕсенче тата социаллă услугăпа тивĕçтерессинче 868 çын (86,7 процент) тăрăшать, вăтам ĕç укçи 13429,2 тенкĕ е 136,7 процент.

Коммуналлă, социаллă тата ытти услуга сферинче 90 çын (90 процент) тăрăшать, вăтам ĕç укçи 12154,4 тенкĕпе (144 процент) танлашать. Вăл шутра культура тата спорт отраслĕнче тимлекенсен йышĕ – 63 (78,8 процент) çын, вăтам ĕç укçи – 12781,3 тенкĕ е 153 процент.

Чăваш Республикинче пурăнакансен 2013 çулхи виççĕмĕш кварталти пурăнма кирлĕ минимум виçине палăртнă, вăл 6176 тенкĕпе танлашнă. Çынсен социаллă тата демографи ушкăнĕсемпе илес пулсан, пурăнма кирлĕ минимум виçи кăçалхи виççĕмĕш кварталта ĕçлеме пултаракан çынсен 6576 тенкĕ, пенсионерсен 5051 тенкĕ, ачасен 6116 тенкĕ пулнă.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

# Чăваш юррисем Украинăра янăраççĕ

Октябрĕн 30-мĕшĕнче Муркашра Украинăран килнĕ хăнасем пулчĕç. Кунта вĕсем район çыннисемпе тĕл пулу йĕркелесе туслăх юррисемпе савăнтарчĕç. Юрăсем вара чăвашла та, украинла та, вырăсла та янăрарĕç.

Хăнасем килни ăнсăртран мар. Чăваш поэзийĕн классикне Çеçпĕл Мишшине унта лайăх пĕлеççĕ, асрах тытаççĕ. Вăл вилнĕ çĕр çинче – Украинăри Остер хулинче нумай пулмасть палăк уçнă. Унта пирĕн республика делегацийĕ те хутшăннă. Халĕ вара хăнасем Муркаша килсе курма кăмăл тунă. Шупашкарта пулкаланă пулин те, Муркашра – пĕрремĕш хут.

«Украинăра чăвашла калаçни, чăваш юррисене хаваспах итлени пирки илтме питĕ хавас. Украинăпа Чăваш Ен хушшинчи туслăх кĕперĕ халăхсене пĕр-пĕринпе çыхăнтарать. Çапла майпа чăвашсем пирки пĕтĕм тĕнчипех пĕлме пултараççĕ», – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев Муркашри информаципе культура центрĕнче хăнасене туслăх концерчĕ парнеленĕшĕн тав тунă май. Çавăн пекех вăл асăннă тĕл пулăва йĕркелеме май тупнăшăн Чăваш Ен суту-илӳ экс-министрне, Канаш районĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ Эхветкасси ялĕнче пурăнакан

Туслă çыхăнусем



Юрий Алексеева тата чăваш прозаикне, поэтне, драматургне, педагогика наукисен кандидатне, ЧАССР культура тава тивĕçлĕ ĕçченне Анатолий Кипече тав сăмахĕ каларĕ.

Чăвашсен Украинăри обществин председателĕ Надежда Лисова тата поэт, композитор, юрăç Юрий Половецкий илемлĕ юрă сахал мар парнелерĕç. Сăмах май вĕсен хăйсен те «тымарĕсем» чăвашран. Чăваш чĕлхине вара вĕсем Украинăра вĕренме тытăннă. Унăн илемлĕхĕ, çепĕçлĕхĕ, илĕртӳлĕхĕ, янăравлăхĕ тыткăнланă вĕсене. Халĕ вара украин юррисемпе пĕрлех чăваш юррисене те хаваспах шăрантараççĕ.

Хăнасем Муркашсемпе сыв пуллашнă май пĕр-пĕрин хушшинчи туслăх кĕперĕ малашне те çирĕпленсе пырассине, пĕр-пĕринпе хутшăнни пуриншĕн те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине пĕлтерчĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

# Çурлатринчен тухнă наука ĕçченĕсем

Район 70 çул тултарнă май

Кĕçех Муркаш районĕ 70 çул тултарать. Çавна май Çурлатринчи сумлă çынсем пирки çырас терĕм. Пирĕн ялта аслă пĕлӳ илнĕ учительсенчен виççĕшĕ хăйсен ĕçне ăслăлăх енĕпе çыхăнтарнă. Сăмахран, **Леонид Сергеев** – филологи ăслăлăхĕсен докторĕ, профессор. Вăл 1929 çулхи июнĕн 3-мĕшĕнче учитель килйышĕнче çуралнă. Тăван ялти пуçламăш шкулта пĕлӳ илнĕ, каярах Муркашри вăтам шкулта вĕреннĕ. Ун хыççăн Леонид Павлович Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче аслă пĕлӳ илнĕ. Алла диплом илнĕ специалист Тойкилтĕри 7 çул вĕренмелли шкулта учитель, завуч, директор, кайран Муркашри вăтам шкулта директор пулса ĕçленĕ. Муркашри районĕçтăвкомĕн çут ĕç пайĕн заведующийĕнче, Муркашри интернат шкул директорĕнче тимленĕ.

1961 – 1964 çулсенче пĕлĕве Чăваш патшалăх педагогика институтĕн аспирантуринче ӳстернĕ. Филологи ăслăлăхĕсен кандидат диссертацине хӳтĕленĕ. Ун хыççăн Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи наука тĕпчев институтĕн наука сотрудникĕ, чĕлхе пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ. Ăсталăхне кура вăл ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тунă. Çапла вара Леонид Сергеев РСФСР Çут ĕç министерствин Наци шкулĕсен тĕпчев институчĕн чăваш лабораторийне йĕркелесе ертсе пынă. 1973 çулта вăл доктор диссертацине хӳтĕленĕ. 1979 çултанпа Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче ĕçлет. Студентсене чăваш чĕлхипе, чăваш диалектологийĕпе лекцисем вулать, практика сехечĕсем ирттерет, наука тĕпчевĕсем туса пырать.

Иккĕмĕшĕ – **Валентин Смирнов** – физикăпа математика ăслăлăхĕсен кандидачĕ, доцент. 1953 çулхи декабрĕн 25-мĕшĕнче колхозник килйышĕнче çуралнă. Муркашри вăтам шкултан вĕренсе тухсан Чăваш патшалăх университетĕнче аслă пĕлӳ илнĕ. Ун хыççăн Шăмăршă районĕнчи Васанти вăтам шкулта ачасене физика вĕрентнĕ. Каярах вара Чăваш патшалăх университетне ĕçлеме куçнă. 1983 çулта Мускаври аспирантурăна вĕренме кĕнĕ. Ун хыççăн вăл физикăпа математика ăслăлăхĕсен кандидачĕ тата доцент пулса тăнă. Халĕ машинăсем тăвассин факультетĕн производствăри роботсен технологийĕн кафедрине ăнăçлă ертсе пырать.

Çурлатри ялĕнчен тухнă ăслăлăх çыннисенчен тепри – **Вениамин Бычков**. Çак пултаруллă тĕпчевçĕн ачалăхĕ те хăй вăхăтĕнчи ытти ачасенни пекех иртнĕ: кăнтăрла иртиччен – вĕренӳре, ун хыççăн вара каçченех колхоз уй-хирĕнче, фермăра е урăх çĕрте аслисене пулăшнă. Ĕçрен хăраса тăман, яланах ыттисемпе тан ĕçленĕ.

Муркашри вăтам шкултан вĕренсе тухсан Чăваш патшалăх педагогика институчĕн филологи факультетне вĕренме кĕнĕ, ăна хĕрлĕ дипломпа вĕçленĕ. Пултаруллă та ĕçчен çамрăк специалиста хăй вĕреннĕ факультетрах ĕçлеме хăварнă. Çавăн пекех вăл аспирантурăра вĕреннĕ. Г. Анисимов профессор ертсе пынипе 2000 çулта кандидат диссертацине ăнăçлă хӳтĕленĕ. Халĕ пирĕн мухтавлă ентеш – вырăс чĕлхипе методика кафедрин доценчĕ.

Вениамин Бычков – канăçсăр тĕпчевçĕ, пĕр самант та ахаль лармасть: яланах тĕпчет, çĕннине шырать, хатĕр ĕçе учительсем патне хăвăрт çитерес тесе ырми-канми тăрăшать.

**Г. ПРАВДИН.**
**Шупашкар хули.**

Палăк



# Пĕрремĕш тĕнче вăрçин паттăрĕсен ячĕпе

Раççейре Пĕрремĕш тĕнче вăрçинче çапăçса вилнисене асăнса монумент тăвас ĕçе пуçăннă. 2013 çулхи октябрь уйăхĕнче Раççей культура министрĕ Владимир Мединский монумент проектне сĕннĕ тата çĕр-шывра пурăнакансене палăка пĕрлехи вăйпа çĕклеме чĕнсе калаçнă. Укçа-тенкĕне Раççей çар историйĕн общества пухать. Финанс тĕлĕшĕнчен Мускав хулин Правительстви, коммерци организацийĕсем, уйрăм çынсем пысăк пулăшу кӳреççĕ.

Палăка Мускавра вырнаçтараççĕ. Вăл темиçе пайран – Пĕрремĕш тĕнче вăрçин салтакне вырнаçтарнă колоннăран, Раççей ялавĕллĕ скульптура композицийĕнчен тата темиçе горельефран тăрать. Проектпа пăхнă тăрăх колонна 13 – 15 метр çӳллĕш пулмалла, палăкăн иккĕмĕш пайĕ – 12 метр çӳллĕш. Скульптура бронзăран пулĕ, ăна Мускав çывăхĕнчи тимĕр шăратмалли заводсенчен пĕринче шăратса хатĕрлĕç.

Владимир Мединский каласа панă тăрăх палăк тăвас ĕç çитес çул июлĕнче вĕçленмелле. Савăнăçлă лару-тăрура палăка августăн 1-мĕшĕнче уçма палăртаççĕ.

**ЧР Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви.**

# Сочири Олимп вăййисене халалланă




Октябрĕн 30-мĕшĕнче çаврăнăша Раççей Банкĕ Сочи хулинче 2014 çулта иртекен Олимп вăййисене халалланă 100 тенкĕлĕх хут укça кăларнă.

Укça тиражĕ 20 миллион экземплярпа танлашать.

Хут укça кăвак тĕслĕ. Унăн пиччен енне сноубордист, хыçал енне вăйăсен тĕп стадионне ӳкернĕ.

Райадминистрацире

# Хисеп грамотипе наградăланă

Район администрацийĕн 2013 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнчи 1091 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

1. Ял хуçалăх производствинче нумай çул тăрăшса вăй хунăшăн – **Славиат Моисеевич ИВАНОВА**, «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕн водительне.

2. Ял хуçалăх продукцине тирпейлекен отраслĕре нумай çул тăрăшса вăй хунăшăн:

– **Валентина Алексеевна МОРОЗОВĂНА**, «Молочный завод «Моргаушский» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн производство цехĕн аппаратчикне;

– **Инна Витальевна ПЕТРОВĂНА**, «Молочный завод «Моргаушский» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн çу хатĕрлекенне.

Библиотека ĕçĕ-хĕлĕн сферинче нумай çул тăрăшса вăй хунăшăн район администрацийĕн 2013 çулхи октябрĕн 11-мĕшĕнчи 1095 № йышăнăвĕпе Турай ял тăрăхĕнчи «Турайри информаципе культура центрĕ» муниципалитет культура бюджет учрежденийĕн филиалĕн – Анаткассинчи ял библиотекин заведующийне **Галина Павловна АНДРЕЕВĂНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас ĕçре тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул тăрăшса вăй хунăшăн район администрацийĕн 2013 çулхи октябрĕн 14-мĕшĕнчи 1102 № йышăнăвĕпе Муркашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулти чăваш чĕлхипе литератури учительне **Алина Варламовна ВАСИЛЬЕВĂНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Район администрацийĕн 2013 çулхи октябрĕн 15-мĕшĕнчи 1108 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

1. Ял хуçалăх производствинче нумай çул тăрăшса вăй хунăшăн – **Елена Романовна ИЛЬИНАНА**, ĕç ветеранне, Çатракасси ял тăрăхĕнчи Ятман ялĕнче пурăнакана.

2. Район экономикипе социаллă пурнăçне аталантарма тӳпе хывнăшăн тата обществăлла ĕçсене хастар хутшăннăшăн:

– **Эльза Леонидовна ТАРАСОВĂНА**, Чăваш Республикин Муркаш район сучĕн председательне;

– **Сергей Владимирович ТРИХАЛКИНА**, Чăваш Республикин Муркаш район сучĕн судйине.

Ял хуçалăх производствинче нумай çул тăрăшса вăй хунăшăн район администрацийĕн 2013 çулхи октябрĕн 17-мĕшĕнчи 1116 № йышăнăвĕпе Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн уй-хир бригадин рабочине **Людмила Вениаминовна СТЕПАНОВĂНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

## Аукцион

### ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ ОТКРЫТОГО АУКЦИОНА

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики (далее - организатор аукциона) приглашает принять участие в аукционе (далее - аукцион), открытом по составу участников и по форме подачи предложений о цене, на право заключения договоров аренды земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района Чувашской Республики.

Основание: постановление администрации Моргаушского района Чувашской Республики от 30.09.2013 г. № 1044

Почтовый адрес, номер контактного телефона, адрес официального сайта организатора аукциона и комиссии по проведению конкурсов или аукционов: 429530, с. Моргауши, ул. Мира, 6 телефон/факс (83541) 62-2-66, 62-5-99, e-mail: http://gov.cap.ru/main/asp?govid=71.

Контактные лица: Захаров И.Н., начальник отдела имущественных и земельных отношений, тел.: 62-2-66

Характеристика объектов аренды:

**Лот №1** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:092701:696, категории «земли сельскохозяйственного назначения». Местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 54422 кв.м.

Обременения: земельный участок не обременен правами третьих лиц, не состоит в залоге, в споре и под арестом.

Ограничения использования земельного участка отсутствуют.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка (размер годовой арендной платы) -2765 (две тысячи семьсот шестьдесят пять) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы земельного участка (553 руб. 00 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы земельного участка (138 руб. 25 коп.).

Срок аренды – 5 лет.

**Лот №2** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:060301:96, категории «земли населенных пунктов». Местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, для установки рекламных конструкций, площадью 12 кв.м.

Обременения: земельный участок не обременен правами третьих лиц, не состоит в залоге, в споре и под арестом.

Ограничения использования земельного участка отсутствуют.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка (размер годовой арендной платы) -2967 (две тысячи девятьсот шестьдесят семь) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы земельного участка (593 руб. 40 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы земельного участка (148 руб. 35 коп.).

Срок аренды – 5 лет.

Перечень документов, представляемых заявителем для участия в аукционе:

1. Заявка на участие в аукционе (в установленной форме) в 2-х экземплярах, с указанием реквизитов счета для возврата задатка. Заявки на участие в аукционе принимаются в кабинете № 312 по рабочим дням по адресу организатора аукциона со дня опубликования данного извещения.

2. Платежный документ (и его копия), подтверждающий внесение заявителем задатка. Задаток перечисляется на реквизиты: Получатель платежа – финансовый отдел администрации Моргаушского района (Администрация Моргаушского района Чувашской Республики), ИНН 2112001366 КПП 211201001, лицевой счет 05123ЧМ0012 в финансовом отделе администрации Моргаушского района, р/счет: 40302810175025013018 в Чувашском отделении №8613 ОАО «Сбербанк России», кор/счет 30101810300000000609, БИК 049706609. В платежном поручении необходимо указать назначение платежа (адрес участка) и дату аукциона.

Задаток возвращается всем претендентам аукциона, в соответствии с условиями договора о задатке, кроме победителя, в течение 3-х банковских дней со дня подписания протокола о результатах аукциона.

3. Выписка из Единого государственного реестра юридических лиц - для юридических лиц, выписка из Единого государственного реестра индивидуальных предпринимателей - для индивидуальных предпринимателей, копии документов, удостоверяющих личность - для физических лиц.

